26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
24
ЫТЛАРИКУН
141(6892)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Еççынни депутачĕсен районовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

СЕНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

81. **«Новая деревня» колхоз** (председательĕ **П. Я. Вдовин** юлташ, ферма заведующийĕ **В. И. Красильникова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 117 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 112 процент, сыснасем енĕпе 127 процент, сурăхсем енĕпе 125 процент тултарнă.

82. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председательĕ **П. В. Васильев** юлташ, ферма заведующийĕ **П. С. Павлов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 108 процент, сыснасем енĕпе 165 процент, сурăхсем енĕпе 160 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн 80 процент аш-какай панă.

ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

83. **«Луч» колхоз** (председательĕ **Тонышев** юлташ, ферма заведующийĕ **Колчанов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 160 процент, сыснасем енĕпе 145 процент, сурăхсем енĕпе 149 процент тултарнă. Кăçалхи 17 тихана пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай парса татнă.

84. **Ильич ячĕпе тăракан колхоз** (председательĕ **К. Д. Наумов** юлташ, ферма заведующийĕ **А. Наумов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 142 процент, сыснасем енĕпе 260 процент, сурăхсем енĕпе 142 процент тултарнă. Кăçалхи çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн 84 процент аш-какай панă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Пĕтĕм Союзри физкультурник кунне— августăн 12-мĕшне хатĕрленесси çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Пĕтĕм Союзри физкультурник кунне—августăн 12-мĕшне хатĕрленесси çинчен решени йышăнчĕ.

Обком бюровĕ çакна палăртса хăварчĕ: республикăра массăллă физкультурăн юхăмĕ вăйсăр пулни, вăл ĕç пуринчен ытла колхозсенче япăх пулни, спортăн тĕрлĕ енĕпе (футбол, ишесси, çăмăл атлетика тата ытти те) япăх ĕçлени çамрăксене физически воспитани парас тĕлĕшпе физкультурăпа комсомол организацийĕсем тата шкулсем çитĕлĕксĕр ĕçленинчен килет. Çакăн пирки те партипе совет организацийĕсен республикăри физкультура юхăмне тĕпренех вăйлатса, спорт обществисемпе физкультура коллективĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатас ĕçе тӳрремĕнех хутшăнмалла.

Обком бюровĕ ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене, Пĕтĕм Союзри физкультурник кунне хатĕрленнĕ май, массăллă физкультура ĕçне лайăхлатас, спорт ĕçĕн пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе тĕпренех улшăнусем тумашкăн тивĕçлĕ мероприятисем палăртса хурса çирĕплетме хушнă. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене, хуласенчи тата районсенчи Советсен исполкомĕсене, комсомол тата физкультура организацийĕсене çапла тума хушнă: Пĕтĕм Союзри физкультурник кунне кӳтнĕ май «ГТО» тата «БГТО» нормисене массăллăн парассине организацилеме, предприятисенче, учрежденисенче тата пысăк колхозсенче пуринче те физкультурăн çĕнĕ коллективĕсене организацилеме тата малтан тунă коллективсене çирĕплетме хушнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çуменчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн тата физкультура организацийĕсен хуласенче тата район центрĕсенче физкультурник кунĕ ячĕпе физкультура ăмăртăвĕсем туса ирттермелле, вăл ăмăртусенче чи лайăх спортменсен çитĕнĕвĕсене анлăн кăтартса памалла.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен предприятисенче, учрежденисемпе колхозсенче физкультура ыйтăвĕсем тăрăх докладсемпе калаçусем туса ирттермелле, çак ĕçе физкультура инструкторĕсемпе преподавателĕсене хутшăнтармалла.

Обком бюровĕ ВЛКСМ Обкомне тата физкультура организацийĕсене Мускаври аш-какай комбинатĕнчи физкультурниксен паха пуçарăвне пурнăçа кĕртме хушнă. Вĕсем хăйсен вăйăпех стадионсемпе спортплощадкăсене йĕркеleме тытăннă. Çав паха пуçарăва асра тытса, комсомолçемпе физкультурниксене çĕнĕ стадионсем, шыв станцийĕсем, спорт площадкисем тăвас, спорт базисене хĕллене хатĕрлес ĕçе мобилизацилемелле.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене, хуласенчи, районсенчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсене физкультурник кунĕ тĕлне юлашки çулсенче япăха кайнă спорт сооруженийĕсене юсас тĕлĕшпе тата çĕнĕ спорт базисем тăвас тĕлĕшпе профсоюз, хуçалăх организацийĕсен, колхозсемпе промартельсен укçа-тенкине мобилизацилеме хушнă.

Обком бюровĕ хуласемпе районсене çĕнĕ спорт базисем мĕн чухлĕ юсамаллине тата çĕнĕрен мĕн чухлĕ тумаллине кăтартса пачĕ.

Обком бюровĕ кăтартса панă тăрăх, Улатăр, Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Кувакино, Муркаш, Октябрьски, Пăрачкав, Советски, Чурачăк, Шăмăршă, Шăхасан, Елчĕк тата Тăвай районĕсенче кашнинчех пĕрер стадион пулмалла; Ишлей, Калинино, Куславкка, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Чкаловски тата Çĕмĕрле районĕсенче, çаван пекех Улатăр тата Канаш хулисенче—кашнинчех икшер стадион пулмалла; Етĕрне районĕнче тата Шупашкар хулинче виçшер стадион пулмалла. Кашни стадионрах футболла выляма лли вырăн, чупмалли çул, сикмелли тата япала ывăтмалли вырăн, баскетбол, волейбол вăййисене ирттермелли вырăн тата гимнастика городокĕсем пулмалла.

Обком бюровĕ кăтартса панă тăрăх, кунсăр пуçне, республикăра 1289 спортплощадка юсаса çитермелле е çĕнĕрен тумалла тата волейбол, баскетбол вăййисемпе ытти вăйăсем валли 990 площадка тумалла. Кашни шкул, предприяти тата пысăк колхоз çумĕнче спортплощадкăсем пулмалла. Вăл площадкăсенче волейбол, баскетбол вăййисен площадкисем, гимнастика городокĕ, сикмелли тата ывăр япаласем ывăтмалли вырăнсем пулмалла. Республикăри ытти пур колхозсенче те спортăн уйрăм пайĕсем тăрăх площадкăсем организацилемелле.

Улатăр, Калинино, Куславкка, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шăхасан, Çĕмĕрле тата Етĕрне районĕсенче, çаван пекех Улатăрпа Шупашкар хулисенче шыв станцийĕсем тума палăртса хунă.

Обком бюровĕ ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитетне августăн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче мĕнпур хуласемпе районсенче комсомолпа физкультура активĕн пухăвĕсене ирттерме хушнă. Вăл пухусенче физкультура организацийĕсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене палăртмалла, çамрăксене физически воспитани парас ĕçе лайăхлатмалли, спортсменсен спорт ĕçĕн пахалăхне хăпартмалли, спорт обществисемпе физкультура коллективĕсен ĕçĕсене çирĕплетмелли мероприятисем палăртса хăвармалла.

Обком бюровĕ Чăваш АССР Совнаркомне республикăпа вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперацийĕн артелĕсенче спорт хатĕрĕсене туса кăларма пулăшакан ĕçсене пăхса туса çирĕплетме хушса хăварчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

РЕСПУБЛИКĂРИ ПУРĂНМАЛЛИ СУРТИЕР ХУСАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН ИЮНЬ УЙĂХĔНЧИ СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТАВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри пурăнмалли суртиер хусалăх предприятийĕсен 1945 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Шупашкарти мунча (директорĕ Костина юлташ) тупăш илмелли плана 2 процент чухлĕ иртерсе тултарнă. Мунча работникĕсене 3 пин тенкĕ преми панă.

Июнь уйăхĕнче Шупашкарти гостиница (директорĕ Додонова юлташ) тата Канашри Колхозник сурчĕ (директорĕ Петров юлташ) лайăх ĕçленине палăртнă.

Çĕмĕрлери, Канашри, Улатăрти мунчасем тата Çĕрпӳри гостиница июнь уйăхĕнче начар ĕçленĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. А. ГАЛИЦКИЙ, Н. М. СЕГАЛ ТАТА В. А. ХОДЯШЕВ ЮЛТАШСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕПЛĔ ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă ятпа юбилейлĕ спектакльсем лартма хатĕрленес тата вĕсене лартас ĕçе активлăн хутшăннăшăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе çаксене наградăлас:

1. Владимир Александрович **Галицкие** —Калинино облаçĕнчи драма театрĕн главнăй режиссерне.

2. Нина Михайловна **Сегале** — Мускаври художниксен союзĕн членне.

3. Виктор Александрович **Ходяшева** — Чăвашсен Государство Академиллĕ театрĕн музыка пайĕн заведующине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июлĕн 14-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

МУСКАВРИ ЛУНАЧАРСКИЙ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ГОСУДАРСТВО ТЕАТР ИСКУССТВИН ИНСТИТУТĔНЧИ УЙРĂМАХ ПАЛĂРНĂ РАБОТНИКСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕПЛĔ ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă ятпа, чăваш студенчĕсен ушкăнне вĕрентес ĕçе активлăн хутшăннăшăн, Мускаври Луначарский ячĕпе тăракан Государство театр искусствин институтĕнчи çак работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăлас:

1. Михаил Николаевич **Баташева** — режиссер-педагога.

2. Дмитрий Данилович **Данилова** — чăвашсен театр студийĕн заведующине.

3. Ядвига Альбертовна **Ковальскаяна**— музыка воспитанийĕн кафедрин аслă преподавательницине.

4. Стефан Стефанович **Мокульские** — институт директорне.

5. Михаил Михайлович **Москвин-Тарханова**—художество руководительне.

6. Ирина Александровна **Нестора** — авторсен факультечĕн деканне.

7. Людмила Давыдовна **Ростова-Шокоревăна**—сцена çинчи сăмах кафедрин аслă преподавательне.

8. Антонина Михайловна **Романова-Шăломытовăна**—актерсен мастерлăхĕн кафедрин профессорне.

9. Олимпиада Сергеевна **Тераковăна**—актерсен мастерлăхĕн кафедрин аслă преподавательницине.

10. Елена Сергеевна **Шишмаревăна**—донцента, сцена çинчи хускалусен мастерлăхĕн преподавательне.

11. Наум Яковлевич **Яковлева** — директор помощникне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлласси çинчен

Малаллă. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138 тата 139-мĕш номерĕсенче.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

4. Мария Семеновна **Мадебейкина** — «Коминтерн» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

5. Елена Андреевна **Михайловăна** — Сорăм ял Советĕнчи налог агентне.

6. Максим Архипович **Овчинникова** — Хĕрлĕ Чутай вăрман хуçалăхĕнчи Пантăк лесничествин лесничине.

7. Степан Никитич **Сажина**—Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕн главнăй инженерне.

8. Мария Федоровна **Трифоновăна** — МТС-ри трактористкăна.

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Анастасия Федоровна **Власовăна** — «Ударник» колхозри ферма заведующине.

2. Николай Павлович **Вишневские** — ВКП(б) райкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.

3. Павел Васильевич **Ерасова** — «Красный колос» колхозри ферма заведующине.

4. Мария Петровна **Кирюхинăна** — МТС-ри трактористкăна.

5. Андрей Михайлович **Ларькова** — Сурмайданри вăрман промысла артелĕн платникне.

6. Федор Петрович **Таланова**—«Путь Ильича» колхоз председательне.

7. Ольга Дмитриевна **Филатовăна** — Кувакинăри вăтам шкулти учительницăна.

8. Николай Алексеевич **Швалева** — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Александр Алексеевич **Анкудинова**— районри финанс пайĕн заведующине.

2. Егор Петрович **Анкудинова** — «Красная Армия» колхоз председательне.

Малалли пулать.

Комсомолăн Шупашкар хулинчи организацине Хĕрлĕ Ялав пачĕç

Çак кунсенче ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Советсен çуртĕнчи **ларусем пулакан зала, пленум членĕсемпе пĕрлех,** хулари предприятисемпе учрежденисенчен тата шкулсенчен ĕçре тата вĕренӳре малта пыракан комсомолçемсем пуçтарăннă. Вĕсен паян уяв. Комсомолăн Шупашкар хулинчи организацине Хĕрлĕ Ялав парасçĕ.

Пленума ВЛКСМ Шупашкăр хула комитечĕн секретарĕ Агеева юлташ уçрĕ.

Президиумра ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем Ислюков, Кулагин юлташсем, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем Михайлов, Петрухин, Спичков, Токарев юлташсем, Чăваш АССР военкомачĕн политотдел начальникĕ Тютиков юлташ тата комсомол хула комитечĕн бюро членĕсем.

Пленумра пулнисем, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйласçĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Л. Михайлов юлташ сăмах тухса калать. Вăл комсомолçем Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче паттăр çапăçни, тылри фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уй хирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени çинчен каларĕ.

— ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх,—тет Михайлов юлташ,—комсомолăн кашни хулари, районри организацийĕн хăйĕн Хĕрлĕ Ялав пулмалла. Çак ялав—комсомол чыслăхне, пĕрлĕхне, комсомолçемсен Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕсте тăнине кăтартакан палла пулса тăрать. Хĕрлĕ Ялав кашни комсомолеца Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн вăй-хала шеллемесĕр ĕçлеме, кирлĕ пулсан, пĕр тумлам юн юлмиччен çапăçма хушать. Çак ялав мĕнпур çамрăксене комсомол тавра пĕтĕçтерме, Тăван çĕршыва юратма, Ленин—Сталин ĕçĕмĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнет.

Комсомолăн Шупашкар хулинчи организацине çак Хĕрлĕ Ялава парса, ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе комсомол обкомĕ вĕсем тата лайăхрах ĕçлесе, Хĕрлĕ Ялавăн чысне çӳлте тытасса шанасçĕ.

Çак вăхăтра Совет Союзăн Геройĕ Сапожников юлташ икĕ ассистентпа ВЛКСМ Хĕрлĕ Ялавне зал витĕр трибуна патне йăтса пырать. Пурте ура çине тăрасçĕ. Оркестр парти гимнне—«Интернационал» вылять. Михайлов юлташ Хĕрлĕ Ялава комсомолăн Шупашкар хула комитечĕн секретарьне Агеева юлташа парать.

Агеева юлташ чĕркуçленсе Хĕрлĕ Ялава чуптăвать. Унтан Шупашкар хулинчи мĕнпур комсомолçемсен ячĕпе ответлă сăмах калать.

— Çак Хĕрлĕ Ялава пирĕн паттăр воинсем Сталинградран пуçласа Берлина илсе çитернĕ. Эпир, вăл ялава илсе, хамăран мĕнпур вăя, пĕлĕве, ăсталăха большевиксен партийĕн аслă идейисене пурнăçлас ĕçе, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес ĕçе пама тупа тăватпăр. Комсомолăн Шупашкар хулинчи организацийĕ, ĕçре те, вĕренӳре те малта пырса, хăйĕн чысне çӳлте тытĕ.

Ун хыççăн хулари заводсенчи комсомолçемпе çамрăксен бригадисен бригадирĕсем Беляевпа Колесников юлташсем, вĕренекенсенчен Якимовпа Жарков комсомолçемсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем комсомол организацине Хĕрлĕ Ялав панине ответлесе, тата лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме, шкулсенче тăрăшарах вĕренме пулчĕç.

Пленумра ВКП(б) Шупашкар хула Комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл комсомолçемсене Хĕрлĕ Ялав илнĕ ятпа саламларĕ, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сунчĕ.

Пленум совет çамрăкĕсен чи сывăх туссĕ Совет Союзăн Генералиссимусĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Столицăра Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне уявлани

Июлĕн 21-мĕшĕнче Горький ячĕпе тăракан Культурăпа кану паркĕнче Тинĕс-Çар Флочĕн Кунĕ ячĕпе чаплă вечер пулса иртнĕ. Вечер пуçланиччен нумай малтан паркăн аллейисемпе площадкисене краснофлотецсем, старшинасем, Хĕрлĕ Флот офицерĕсем тата столицăри ĕççыннисем пырса тулнă. Мускав шывĕн хĕррипе аллейăсене тĕрлĕ тĕслĕ пĕчĕк ялавсемпе, плакатсемпе тата транспарантсемпе илемлетсе тухнă.

Каçхине 8 сехетре Симĕс театра 15.000 çын ытла пухăннă. Унта çĕршыври Тинĕс-Çар Флочĕн паллă çыннисем—балтиецсем, черноморецсем, североморецсем, тихоокеанецсем, столицăри парти, совет тата комсомол организацийĕсен представителĕсем пынă. Нумайĕшĕн кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем ялкăшаççĕ.

Симĕс театрăн сцени çинче Совет Союзĕн Генералиссимусĕн Сталин юлташăн портречĕ.

Тăвăллăн нумайччен алă çупса Сталин юлташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюровне хисеплĕ президиума суйласçĕ.

Президиум сĕтелĕ хушшине çаксем вырнаçаççĕ: Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Флот адмиралĕ И. С. Исаков, Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный, ВКП(б) Мускав Комитечĕн секретарĕ Черноусов, ВКП(б) Мускав хула Комитечĕн секретарĕсем Павлюков, Данилов, Соколов юлташсем, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем —Флот адмиралĕ Л. М. Галлер, çыран службин генерал-полковникĕ И. В. Рогов, çыран службин генерал-полковникĕ С. И. Воробьев, Г. И. Левченко адмирал, П. С. Абанькин вице-адмирал, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ И. Д. Папанин контр-адмирал тата ытти сем те.

Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Абанькин вице-адмирал Тинĕс-Çар Флочĕн Кунĕ çинчен доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче вăл Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ утса тухнă пăттăр кунçул çинчен, Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче моряксем тунă пăттăр ĕçсем çинчен каласа панă.

— Пăттăр Хĕрлĕ Çăран чаçĕсемпе пĕрле Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ чаплă ĕç турĕ. Эпир фашистла Германие çĕнтертĕмĕр. Пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çара мухтав, Тинĕс-Çар Флотне мухтав, пирĕн полководеца Совет Союзĕн Генералиссимусне Сталин юлташа мухтав!—теннĕ юлашкинчен Абанькин юлташ.

Тăван та юратнă çулпуçа, учителе тата полководеца Сталин юлташа чысласа тăвăллăн, нумайччен алă çупни пултĕнсе тăнă.

Столицăри çамрăксен ячĕпе ВЛКСМ Мускав Комитечĕн тата Мускав хула Комитечĕн секретарĕ Красавченко юлташ саламлă сăмах тухса калать. Столицăри ĕççыннисен ячĕпе чаплă моряксене Мускав Совечĕн Председательĕ Заместителĕ Парфенов юлташ саламлать.

Чаплă лару участникĕсем, тăвăллăн алă çупса, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ И. В. Сталин патне салам яма йышăнать.

Юлашкинчен краснофлотецсен пултарулăх вăйĕсем хутшăннипе пысăк концерт пулса иртнĕ.

* * *

СССР Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне столицăра уявлани чăн-чăн халăх уявĕ пулса тăнă. Пиншер çын ирхине прех Химкине кайнă, унта СССР Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне уявласа шыв спорчĕн пысăк уявĕ пулса иртнĕ. «Динамо» шыв станцийĕ патне Мускав çыннисем 15 пин çын пухăннă. Пухăннисем хушшинче адмиралсем, офицерсемпе краснофлотецсем —флотăн паллă çыннисем: икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ 3-мĕш рангри капитан Шабалин, Совет Союзĕн Геройĕ 1-мĕш рангри капитан Египко тата ытти сем те. Кунта Совет Союз Геройĕн хисеплĕ те чыслă ятне Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче илме тивĕçлĕ пулнă 412 çар морякĕсен представителĕсем.

Уява ют çĕршывсен тинĕс атташисем те пынă.

11 сехет те 55 минутра шыв станцийĕн вышки çине горнист тухать. Шăплăхра Химкири лăпкă шыв çийĕне трубан илемлĕ сасси янăраса каять. Вышка çине Кудрявцев контр-адмирал хăпарать.

— Парад, шагом марш! — тесе парать вăл команда. Оркестр сасси янăраса каять. Трибуна умне Совет Союзĕнчи флотсемпе флотилисенчи ишекенсен командисем тухса тăрасçĕ. Малта — спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Поджуревич старшина, лейтенант, ун хыççăн спорт мастерĕсем—Озеров майор, Савельев главнăй старшина, Дулинец кĕçĕн лейтенант, Кокорин старши техник-лейтенант, Пустяков мичман тата ытти сем те. Шывран хăпарса тăракан вышка патĕнче ишекенсем 300 çын ытла тăрасçĕ.

Парада Грен вице-адмирал йышăнать. Кудрявцев контр-адмирал панă рапорта йышăннă хыççăн, вăл физкультурниксене сывлăх сунса, вĕсен речĕ умĕнчен утса тухать те сăмах калать.

Чаплă вăхăт—Тинĕс-Çар Флочĕн ялавне çĕклемелли вăхăт çитет. Совет Союзĕн чаплă гимнне каланă вăхăтра пысăк ялав çӳлелле хăпарать.

Моряксем уява Сталин юлташа саламланипе уçасçĕ. Шывра ишекенсем пин çын ытла шыва кĕреççĕ. Кашнин аллинчех тĕрлĕ тĕслĕ сывлăшра вĕçекен шар. Паруслă шлюпка çинчен уçă сасă илтĕнет:

— Аслă Сталина—ура!

Пиншер çын çав салам сумне хутшăнаççĕ, шыв çийĕне краснофлотецсем «ура» кăшкăрни илтĕнсе каять. Çакăнпа пĕрлех сывлăша пиншер шар хăпарса каять. Хĕвел çинче вĕсем тĕрлĕ тĕслĕн йăлтăртатаççĕ.

Флотри чи лайăх спортсменсем, кăтартуллă мастерсем, ишме пуçласçĕ. «Батерфляй» стилĕпе 100 метра çити ишес тĕлĕшпе флот пăхса çитĕнтернĕ пĕтĕм тĕнчери рекордсмен Семен Бойченко пит лайăх тĕслĕх кăтартса парать. Кăтартуллă ăмăртăва СССР тата флот чемпионĕ Пустяков мичман, Тинĕс-Çар Флочĕн чемпионĕ Либин тата ытти сем те хутшăнаççĕ.

Ишме чарăннă хушăра канат туртас тĕлĕшпе флотра йăлана кĕнĕ ăмăртусем пулса иртеççĕ. Черетпе Хĕрлĕ Ялавлă Балтика Флочĕн, Лăпкă океанпа Сурçĕр Флочĕсен командисем ăмăртаççĕ. Çав ăмăртура Лăпкă океан флочĕн команди мала тухать.

Трамплин çинчен тата 10 метр çӳллĕш вышка çинчен сиксе Тинĕс-Çар Флочĕн Сывлăш-çар призне илес тĕлĕшпе пулса иртекен ăмăртусем питĕ илемлĕн курăнаççĕ. Çине тăрса кĕрешнĕ хыççăн спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Гайковой мала тухать. Çав вăхăтрах 10 кабельтовăй хушши кĕсменпе ишмелли ăмăртусем пулса иртеççĕ. Вăл ăмăртăва пур флотсемпе флотилисен командисем те хутшăнаççĕ. Ку ăмăртура малти вырăна Хура тинĕс моракĕсем йышăнаççĕ.

Уявăн программи нумай тĕрлĕ. Мускав сыннисем хăюлăхпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен çав тери тĕлĕнтерекен япаласене — скутер çинчи çăлтăрсене, акваланистсене туртса кайнине, чăрмавсене çĕнтермелли эстафетăна, паруслă яхтăсем ăмăртăвне, Тинĕс-Çар Флочĕне Хĕрлĕ Çăран командисем ăмăртнине кураççĕ.

Тинĕсе пырса десант антарнине кăтартса пани çав тери тĕлĕнтерет. Вăрçă вăхăтĕнче тăшман пĕр паллă десант операцийĕ те тума пултарайман. Совет моракĕсем вуншар десант операцийĕ тупă, ку тĕлĕшпе те вĕсем тăшманран вăйлăрах пулнине кăтартса панă.

Десант антармаллине кăтартса панă çĕрте Керчь, Новороссийск тата ытти вырăна десант антарнă çĕре хутшăннă геройсем пулнă. Десант антарассине Стражемейстер подполковник ертсе пырать. Десант умне «тăшманăн» çыран хĕрринчи тĕреклетнĕ пунктне тытса илес задача лартнă. 20 катер ытла «тăшман çине» артиллерипе пеме тытăнаççĕ: Перше тăнă хыççăн çыран хĕрринелле 4 катер ишсе пырать. Каскăсем тăхăннă боецсем типĕ çĕре сиксе тухаççĕ. Ку—заграждени ушкăнĕ. Вăл пысăк мар плацдарм тытса илет. Пĕрремĕн ушкăн хыççăн, таттисĕр персе, çыран хĕрринелле ытти катерсем ишсе пыраççĕ. Вĕсене Заверткин капитан тата 3-мĕш рангри капитан Исаков ертсе пыраççĕ. «Тăшманăн перше тăракан вырăнсене» сирпĕнтерсе ярсан тата пĕтерсе тăксан, катерна пынисем тип çĕр çине тухаççĕ. «Тăшман вăйлăн хирĕç тăрать», вăл пирĕн пĕр катера «вут хыптарать». Анчах десантниксем «тăшмана» хăваласа пырса плацдарма тытса илеççĕ те, хăйсен умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртеççĕ.

Шыв спорчĕн уявĕнче совет моракĕсем —СССР Çар Флочĕсемпе флотилисен представителĕсем тинĕс-çар ĕçне лайăх пĕлнине тата хăйсен спорт мастерлăхне кăтартса панă.

Тинĕс-Çар Флочĕн краснофлотецĕсем, старшинасемпе офицерсем ăмăртнине кураканскем тăватă сехет хушши куç сиктермесĕр тимлĕн пăхса тăнă. (ТАСС).

Хула валли — вутă

Наркомфин коллективĕ хула валли 450 кубометр вутă хатĕрлемелли задание тултарнă хыççăн шефа илнĕ шкул валли татах та 100 кубометр вутă хатĕрлеме обязательство илчĕ.

Коллектив, çак кунсенче вăрмана икĕ кун хушши кайса ĕçлесе, çав обязательствăна пĕтĕмпех пурнăçларĕ: шкул валли 100 кубометр вутă хатĕрлесе пачĕ.

Вутă хатĕрленĕ çĕрте уйрăмах Платонов, Иванов, Матвеев, Туржанова, Смородинова, Васюхина тата Леонтьев юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вутă хатĕрлес ĕçе пуçламăш парторганизаци секретарĕ Ланьков юлташ тата Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ Таврин юлташ пуçарса ертсе пычĕç.

Наркомфин коллективĕ хулари ытти коллективсене хăйĕнчен пример илме, вутă хатĕрлемелли плана срокчен тултарма чĕнет.

И. З.

Çĕнтерӳçĕ-воинсене ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илетпĕр

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра «Вăтăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен йышăннă закона» пур цехсенче те тĕплĕн сӳтсе-явнă. Рабочисем паттăр воинсене ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме татăклă обязательствăсем илчĕç, хăйсен кулленхи ĕç нормине 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ.

Килекен воинсене савăнăçлăн кĕтсе илес, вĕсене пурăнма лайăх условиксем туса парас тата ĕçе тĕрĕс вырнаçтарас тĕллĕпе заводра ятарласах комисси уйăрнă. Ку комиссие завком представителĕ Новикова юлташ ертсе пырать.

Комисси завода миçе çын таврăнмаллине, вĕсене мĕнле ĕçе вырнаçтармаллине тата мĕне пулăшу кирлине тĕплĕн шута илсе тухнă. Çар çыннисен çемьисен пурнăç условийĕсене тĕрĕслесе тухса, общежитисемпе хваттерсене васкасах юсама тытăннă.

Килекен воинсем валли 12-мĕш общежитинче хĕрлĕ кĕтес пулать. Унта вĕсене валли хăйсен вăхăтне савăнăçлă та культурăллă канса ирттерме пур условиксем те туса хатĕрленĕ. Хĕрлĕ кĕтесе тĕрлĕ лозунгсемпе, плакатсемпе, портретсемпе илемлетнĕ, шашка-шахмăт комплекчĕсем хатĕрленĕ. Политикăллă ĕçе туса пыма докладчиксемпе агитаторсем уйăрнă.

Воинсем килнĕ ятпа заводра митинг тата вечер пулать. Вăл вечерта Цибульский юлташ ертсе пыракан художествăллă пултарулăх кружокĕ хăйĕн вăйăпе концерт парать.

М. ДМИТРИЕВ,
ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ.

Ача амăшĕ-героиньăна чыс та хисеп

Пирĕн республикăри «Ача амăшĕ-героиньăсен» шутне çак кунсенче тата тепĕр героиня хутшăнчĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕ пирĕн республикăри 11 ача амăшне — Хабикамал Галяутдиновна Насыбуллина юлташа «Ача амăшĕ-героиня» ятне парса, «Ача амăшĕ-героиня» орденпа тата СССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăларĕ.

Хабикамал Насыбуллина Куславкка районĕнчи Эльменкасси ялĕнче пурăнать. Вăл халĕ 51 çулта. Вăл 6 хĕр тата 5 ывăл пăхса çитĕнтернĕ.

Аслă хĕрĕсем Мариампа Зайлаб Эльменкасси ялĕнчи «Кзыл-Куч» колхозра ĕçлеççĕ. 25 çулхи Шейхулла тата 18 çулхи Абдулкадыр—Хĕрлĕ Çарта. Фатымăпа Зайтуна ятлă хĕрĕсем колхозра лайăх ĕçлеççĕ. Ыттисем пурте Тăван çĕршывăн усăллă çынсем пулма хатĕрленеççĕ.

Çулĕсем енчен çамрăках мар пулсан та, Хабикамал Галяутдиновна колхозра тăрăнса ĕçлет. Унăн ĕçри хастарлăхне курсан, ăна никам та 51 çула çитнĕ тесе каламĕ. Вăл яланах савăнăçлă та ăстар.

Çак чапла та мухтавлă ята илнĕ ятпа сирĕ «Ача амăшĕ-героиньăна» татах та нумай çулсем пурăнма чи ырă кунçул суватпăр.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮЛĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Сĕртме тунă	Сĕруллине малтанхи хут куплаянă	Пахча-çимĕç сунланă	Уăх утă суннă	Силос хывнă
Советски	120,3	98,7	100,0	93,8	24,9
Чурачăк	114,5	100,0	100,0	99,2	59,3
Шăхасан	110,3	100,0	100,0	100,0	—
Элĕк	109,0	76,6	100,0	46,7	35,1
Канаш	108,0	86,9	100,0	74,8	—
Вăрнар	107,1	100,0	100,0	92,1	—
Етĕрне	106,5	99,8	100,0	85,4	31,4
Çĕрпӳ	104,7	100,0	100,0	88,1	—
Сĕнтĕр	103,6	90,6	96,0	57,3	28,9
Сĕнтĕрвăрри	103,5	100,0	77,4	85,5	101,4
Вăрмар	103,2	100,0	100,0	89,1	33,7
Йĕпреç	102,9	96,3	83,1	179,5	12,9
Ишлей	102,7	94,3	100,0	87,0	—
Красноармейски	101,8	100,0	98,2	98,0	23,8
Калинино	101,5	100,0	100,0	79,2	—
Октябрьски	101,3	100,0	100,0	91,3	35,9
Шупашкар	101,3	98,0	100,0	72,4	26,7
Муркаш	101,1	100,0	100,0	83,2	28,6
Елчĕк	100,8	100,0	100,0	82,8	41,9
Куславкка	100,2	95,5	100,0	85,4	33,7
Хĕрлĕ Чутай	96,9	96,4	98,0	90,9	6,2
Çĕмĕрле	95,3	89,8	94,3	70,3	—
Тăвай	93,9	77,9	60,0	77,5	27,6
Первомайски	88,8	100,0	100,0	88,5	37,5
Комсомольски	81,6	100,0	100,0	68,3	69,4
Чкаловски	80,2	100,0	91,0	90,0	—
Шăмăршă	79,7	100,0	100,0	71,0	9,6
Улатăр	56,8	—	79,4	65,9	68,0
Пăрачкав	48,7	85,7	100,0	68,9	33,2
Кувакино	24,5	54,8	78,7	79,4	—

Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕсем тăватпăр

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕпе паллаштарас май районри ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен тата партипе совет активĕн канашлăвне туса ирттертĕмĕр. Çак кайтупах колхозсенчи агитаторсен семинарĕсем те пулса иртрĕç. Çак паха постановление колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса парас шутпа, районри партипе совет активĕнчен 37 çынна колхозсене ятăмăр. Çав юлташсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче кăна мар, агитаторсемпе пĕрле бригадăсемпе звеносенче те ăнлантарса параççĕ тата колхоз председателĕсемпе бригадирсене тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре пулăшаççĕ.

Тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес ĕçре ялхуçалăх машинисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа вĕсене вăхăтра юсамалла. Пирĕн районра пурĕ те 25 тимĕрçе лаççи кăна пулнă. Пур колхозсене те тимĕрçĕсем çитчĕр тесе, энир тата 8 тимĕрçе лаççи усрăмăр. Кашни лаçăрах 1—2 тимĕрçе ĕçлет. Тимĕрçĕсем валли кирлĕ таран кăмăк, тимĕрçĕ хатĕрĕсем тупса патăмăр. Халĕ çав тимĕрçĕсем районри колхозсен пур тĕрлĕ машинисене те вăхăтра юсаса ĕлкĕртме пултараççĕ.

Пирĕн колхозсенче 108 жнейка, 78 молотилка юсамаллаччĕ. Паянхи кун тĕлне колхоз тимĕрçисем 61 жнейка, 45 молотилка юсаса пĕтернĕ. Вĕсене государство комиссийĕсем лайăх юсанă тесе йышăннă.

Кашни колхозрах халĕ тырă склачĕсемпе кĕлетсене тасатса дезинфекци тăваççĕ.

Иртнĕ çулсенче аван çапас ĕçе йĕпесапаллă çанталăк нумай чăрмантарса тăнине шута илсе, кăçал эпир кашни колхозрах, кашни бригадăрах авăнсем тума йышăнтăмăр. Пурĕ 78 аван пулать, паянхи кун 37 авăн туса пĕтернĕ. Витнĕ итемсем те колхозсен кашни бригадинчех пĕрререн кая мар пулаççĕ. Халĕ итемсен çийĕсене витеççĕ, иртнĕ çулхи улăмсемпе ытти кирлĕ мар япаласене тасатаççĕ.

МТС-ăн 9 комбайн тата 9 молотилка юсамалла. Анчах кунта вара юсав ĕçĕ ытла та çителĕкĕр пырать-ха. Паянхи кун тĕлне пурĕ те 5 комбайн тата 4 молотилка кăна юсанă. Ку ĕçре запаслă пайсем сукки питĕ пысăк чăрмав кӳрет. Çав вăхăтрах МТС дирекцийĕн те кирлĕ пек çаврăнăçулăх çук.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сӳтсе-явнă май кашни колхозрах ĕç планĕсем тăваççĕ. Тырă вырма тытăннă малтанхи кунсенче пĕтĕм ĕç вăйне тырă вырнă çĕрте ĕçлеттерме пăхнă, 3-мĕш кунĕнче ĕç вăйĕн пĕр пайĕ авăн çапма каять.

Кашни колхозрах государствăна тырă лесме ятарласа транспорт бригадисем организацилеççĕ. Çав бригадăсен йышне тата вĕсен бригадирĕсене ВКП(б) райкомĕпе райисполком ларăвĕсенче пăхса тухса çирĕплететтепĕр.

В. ЧЕРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пĕчĕк фельетон

Улшуçсем

Фельетон тесен, пирĕн тӳрех кулмалли шыраççĕ. Малтанах каласа хуратпăр: кулмалли кунта нимĕн те пулмасть.

Кичемрех те салхуллăрах истори.

Чурачăк районĕнчи уполнаркомзага лаша кирлĕ пулнă. Мĕншĕн кирлине ăнлантарса пани кунта пачах та вырăнсăр. Ăна пурте пĕлеççĕ. Лайăх лаша, тарантас... Авторитет! Лашасăр мĕскер? «Аптăритет аптăрать!»

Наркомзагăн Чурачăк районĕнчи уполномоченнăйĕ пулнă Степанов ку ыйту пирки мĕне шухăшланă—пĕлместпĕр. Анчах унăн пĕтĕм ĕçĕ тата ун хыçăн пулса иртнĕ «историсем» пурте çӳлерехре кăтартнă шухăшсене палăртса тăраççĕ. Степанов Сурăмри «Заря» колхоза пынă та:

—Лаша кирлĕ, мĕншĕнне хăвăрах чухламалла,—тенĕ. — Вăхăтлăха, вăхăтлăха...

«Вăхăтлăха» тенĕ сăмах колхоз председателĕн кăшт шикленсе кайнă чунне çийĕнчех лăплантарнă. Ырă кăмăллă председатель вара райуполнаркомзага ытлашши чăкрашса тăмасăрах лаша парса янă.

Нумай та вăхăт иртмен, «Заря» колхоз Чурачăк районĕнчен Шăхасан районне куçса кайнă.

—Аха! Пуçĕпех лашаллă пулма май пур...

«Заря» колхозран илнĕ лаша райуполнаркомзаг аллинчех юлнă-ха, çӳресен-çӳресен, вăл начарланса та кайнă.

—Улăштарсанччĕ... Вара... Вара хамăран лаша пулатчĕ!

Ĕç пĕр ăнсан, ăнсах пырать иккен! Çав вăхатра районри лашасене çар комиссийĕ пăхма тытăнать. Чурачăка колхозсенчен лашасем нумай пырса туласçĕ. Кăшнаруйри «Прожектор» колхоз та кунта хăйĕн лашисене илсе пынă. Вĕсен пĕр çамрăк ăйăрне Хĕрлĕ Çар фондне юрăхлă тесе йышăннă.

Уполнаркомзагсем сывăрмаççĕ. Вĕсем «Прожектор» колхоз председательне Якимов юлтана хăйсем патне чĕнтереççĕ те çапла каласçĕ:

— Итле-ха, ырă çыннăмăр, сирĕн ăйăра пурпĕрех Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Халĕ май килнĕ чух ăна пирĕн лаплапа улăштарăр та...

— Вара?—тесе ыйтать председатель, ăнланаймасăртарах.

— Вара сирĕн лаша йышĕ чакмасть. Энир те ăйăрлă пулатпăр. Сире ĕç лаши ытларах кирлĕ. Пиртен ăйăра никам та, ниçта та хлеймест.

Каласнă, татăлнă, килĕшнĕ, улăштарнă... Мăкăрччи ĕçинне пĕлместпĕр.

Çапла Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозăн лаши Чурачăк районĕнчи «Прожектор» колхоз аллине каять. Уполнаркомзаг аллине «Мотор» ятлă ăйăр юлать.

Кун иртет те эрне иртет. Хĕвел хĕртет, хушăран çумăр та çукалать. Пĕррехинче Кăшнаруйри «Прожектор» колхозăн Сурăмри «Заря» колхоза кайма тӳр килет. Ун пек—кун пек пуласса кĕтмен кăшнаруйсем тин çеç уполнаркомзагран улăштарса илнĕ «çĕнĕ» лашапа Сурăма пырса кĕреççĕ.

Сурăмсем çакна кураççĕ те хĕпĕртесех ӳкеççĕ:

—Акă, хайхи, пирĕн лаша тинех киле çавăрăнса çитрĕ, —теççĕ вĕсем. Нумай калаçса тăмасăр, вĕсем лашана (чăн-чăн хăйсен лашине) тăвараççĕ те илеççĕ. Кăшнаруй çыннин киле çуранах тавăрăнма тивет.

Çак хыпар уполнаркомзага та çиçĕм некех пырса çитет.

—Ара, халь ĕнтĕ «Прожектор» колхоз хăйĕн ăйăрне каялла тытса илет-иç!—хыпăнса ӳкет райуполнаркомзагри Антонов юлтан,—Ăйăра халех кампа та пулин улăштарса ямалла та ура ĕçĕрине те шăлса лартмалла.

Шухăшланă — тунă. Уполнаркомзаг «Мотор» ятлă ăйăра Шуркассинчи «Первое мая» колхозăн лашипе улăштарса ярать. «Йĕрĕ, йĕрĕ пĕттĕр!»

«Первое мая» колхозăх пуçлăхĕсем, ăйăра хăйсен аллине илсенех, кастарса яраççĕ. «Ĕç выльăхĕ пултăр, нечĕвă унта алăран-алла сиккелесе çӳреме!»

Çапла вара тухатмăш тимĕр карта çавăрнă пекех пулса тухать: Сурăмри «Заря» колхоз вăхăтлăха уполнаркомзага панă лашине каялла илет. Чурачăк районĕнчи уполнаркомзаг паян кун та лашаллă пурăнать. Шуркассинчи «Первое мая» колхоз та пайтасăр юлмасть. Анчах пĕр «Прожектор» колхоз кăна хăйĕн «Мотор» ятлă лайăх ăйăрне çухатать. Ун вырăнне вĕсене уполнаркомзагри юлташсем «чаплă» фокус туса кăтартрĕç:—Акă, сирĕн аллăрта «Мотор». Куçа мăчлатарса хупса илĕр—«Мотор» çук та!

Тĕлĕнмелле-и?

Тĕлĕнмелле мар. Чурачăк райуполнаркомзагĕнчи çынсене партипе правительство выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановление аса илтермелле. Унта çапла каланă:

«Колхозсенчен сутăн илнĕ пек туса лашасем илме тата колхозри лашасене законсăр илсе тытказама чарас, çав ĕçшĕн айăпа кĕрекен çынсене вырăнтан кăларса суда памалла тăвас», тенĕ.

Чурачăк райуполнаркомзагĕн фокусникĕсене, тĕрĕсрех каласан улшуçсене, çак закон шăп та шаях ĕнтĕ çамкаран пырса çапать.

С. ШАДИН.

Берлинăн совет çарĕсем оккупацилеме пайĕнче суд органĕсене туса хурăç

БЕРЛИН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Дас фольк» хаçат çапла пĕлтерет: Берлинăн çар комендантчĕ кăларнă приказ тăрăх, совет çарĕсем оккупацилеме зонăра çĕнĕ суд органĕсем туса хунă. Мăн Берлинăн кашни районĕнче районри суд туса хунă, ку суд чи кĕçĕн суд. Районри суд хыççăн асларааххи—хула судĕ. Ку судра районри судсем пăхса тухнă ĕççене, вĕсемпе килĕшмесен, пăхса тухаççĕ. Судсем нимĕççен 1933 çулччен законĕсем тăрăх ĕçлеççĕ. Суд органĕсене тунă чухне çакна тĕпе хунă: судьясем чăн-чăнах фашизма хирĕç кĕрешекенсем пулмалла, вĕсен мĕнпур вăйпа нацистла шухăш-кăмăла пĕтерме тăрăшмалла, хăйсен ĕçĕсемпе халăха хăйсем майлă çавăрмалла.

ГРЕЦИРИ МОРЯК СОЮЗĔСЕН ФЕДЕРАЦИЙĔ ВИСĔ ДЕРЖАВА РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Грецири моряк союзĕсен федерацийĕ Греци суту-илу флочĕн морякĕсене пĕрлештерсе тăрать, унăн руководстви Кордифф хулинче ĕçлет. Çав федераци Трумэна, Черчилле тата Сталина чĕнсе каланине хаçатсенче пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Греци халăхĕ тата унăн тăшмана хирĕç кĕрешекен юхăмĕ (ЭАМ), союзниксен демократи çĕнтерессишĕн фашизма хирĕç пынă кĕрешĕвĕн авангардĕнче çапăçнăскерсем, халĕ гитлерла йĕркерен хăтăлса ирĕке тухнă ĕнтĕ, анчах та, вĕсене Греци фашисчĕсемпе квислингĕсем пусмăрласа тăраççĕ. Гитлерла Германие хирĕç çапăçса, пирĕн çĕршывра 8 миллион çын пĕтрĕ, вăл шутран пĕр миллион çынна вĕлернĕ. Халĕ пирĕн çĕршыври влаçа тытса тăракан правительствăна Грецри халăхĕ нихăçан та суйламан, Греци халăхĕ ун пек правительство тума килĕшнине нихăçан та пулман. Чăннипе каласан, çав правительство монархистсемпе фашистсен тата квислингсен, Грецире пуç пулса тăраканскерсен, усал алли пулса тăрать».

ЭАМ руководителĕсем союзлă державăсене июлĕн 10-мĕшĕнче чĕнсе калани пирки тата Софулис, Кафандарис, Пластирас, Милонос июлĕн 16-мĕшĕнче Вулгарис премьер-министра пакă меморандум пирки асăнса, Грецири моряк союзĕсен федерацийĕ малалла çапла каланă: ЭЛАС-ăн 60.000 салтакне хĕсĕрлеççĕ, юлашки тăватă уйăх хушшинче 900 патриота вĕлернĕ, демократсем майлă тăракан теминçе пин граждăна хупса лартнă. Аслă офицерсенчен тăракан монархистла-фашистла çар союзĕ çарта пăлхав тума хатĕрленет, çав пăлхавра вара Греции ĕлĕкхи короле илсе килсе, ăна Греци пуçлăхне лартасшăн, тенĕ.

Юлашкинчен чĕнӳре çапла каланă: «Греци халăхĕ халăхи рăхăтра конференцие пухăннă аслă держава пуçлăхĕсенчен çакна ыйтать: Греци халăхне Балканри тата Европăри мирлĕ пурнăçа пăсма хатĕрленекен хура вăйсенчен ирĕке тухма пулăшăр. Греци халăхĕ Грецире те Ялтăри килĕшĕвĕн принципĕсене пурнăçа кĕртме ыйтать, мĕншĕн тесен Греци те çав принципсемĕн хытă кĕрешнĕ, нумай асап тӳснĕ. Греци халăхĕ Грецире чăн-чăн халăх шанакан демократи майлă çынсенчен правительство туса хума ыйтать. Çав правительство конституцилĕ ассамблейăна суйламашкăн суйлавсем туса ирттермелле е союзниксен комиссийĕ контроллесе тăнипе халăх хушшинче плебисцит туса ирттермелле».

Грецири моряк союзĕсен федерацийĕ ячĕпе чĕнĕве секретарьсен ĕçĕсене туса тăракансем Паллес тата Палеологос алă пуснă.

ИТАЛИРИ ЗАБАСТОВКАСЕМ

РИМ, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Анс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 13-мĕшĕнче Равенна, Флоренци тата Луго хулисенче пĕтĕмĕшле забастовка пулнă. Çав хуласенче демонстраци тума урамсене 70 пин рабочие яхăн тухнă.

Венеци облаçĕнче июлĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ забастовка хыççăн союзниксен çар администрацийĕн (Амготăн) тăшмансене тасатма туса хунă Венеци провинцийĕнчи комиссийĕ вырăнтан тухнă. Халĕ Амгот çĕнĕ комисси тунă. Çĕнĕ комиссие халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен провинцири комитетсем кăтартса нанă сынсене кĕртнĕ.

Венеци облаçĕнчи Амгот комиссарĕ Димлон генерал забастовка пирки çапла каланă: «Граждăнла халăх союзниксен хĕсĕпаллă вăйĕсене хирĕç кĕрешни пулмалла мар; куçса çӳрес ĕçе чарса лартпине, транспорт службине йĕркерен кăларнине союзниксем чăтма пултараймаççĕ. Халь пулса иртнĕ забастовкăри пек ĕçсем татах пулас пулсан, питĕ хăвăрт вăрçăри пек мерăсем йышăнатпăр, граждăнла халăха вăрçăри пек хаяр дисциплинăна пăхăнтаратпăр», тенĕ.

КĔСКЕН

Италире минăсенчен тасатман çĕр (суханламалли çĕр) 1.000 тăваткăл километр ытла шутланать. Малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, 5—6 миллион мина кăлармалла. Ситес çулталăк çурă—икĕ çул хушшинче минăсене пĕтĕмпех тасатса çитермелле.

„Америкăри армянсен халăх совечĕ“ Трумэнпа Сталина тата Черчилле чĕнсе калани

ПЬЮ-ЙОРК, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Америкăри армянсен халăх совечĕн» прогрессивлă лидерĕсем хаçатсенче заявлени пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем, Турцие кĕрекен армени провинцийĕсене «вĕсен пĕртен пĕр законлă представительне—Совет Арменине» тавăрса пама ыйтса, Трумэна, Сталина тата Черчилле чĕнсе калана.

Иртнĕ ĕмĕрсенче туркăсем армян халăхне асаплантарнине аса илсе, чĕнсе каланинче малалла çапла çырнă: «Телей пула, Арменин пĕр пайĕнче, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăллă Российăра пулнăскерĕнче, Совет Союзĕн татăлми пайĕ пулса тăракан Армени республикине туса хунă. 25 çул пурăнса ирттернĕ вăхăтра Совет Арменийĕ çав тери пысăк утăмсемпе малалла кайса пычĕ. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра армянсем хăйсем ирĕклĕхе юратнине тепĕр хут уççăн кăтартса пачĕç, вĕсем союзлă халăхсен çарĕсенче, пуринчен ытла Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕн çарĕсенче пулса, тăшмана хирĕç хастарлăн кĕрешрĕç.

Çав вăхăтрах туркăсем хăйсен яланхи икĕпитлĕ политикине тытса пычĕç. Нейтралитет ячĕпе усă курса, вĕсем наци-систсене пулăшса пычĕç, Германин малтанхи ăнăçăвĕсемшĕн савăнса тăчĕç. Наци-стсем Сталинграда тытса илнĕ пулсан, туркăсем Германи майлă вăрçа тухма хатĕр тăратчĕç. Çав вăхăтрах вĕсем Турцири йышлă мар армян халăхне пусмăрлама çĕнĕ меслетсем тупса пычĕç. Чи юлашки вăхăтра Турци Германие хирĕç вăрçăпа тухасси çинчен пĕлтерни ниме юрăхсăр ĕç пулса тăчĕ. Туркăсем армянсене ĕмĕрсем хушши асаплантарса пурăнчĕç. Хальхи вăхăтра Совет Арменийĕн тата Совет Союзĕн ытти пайĕсен тулашĕнче пĕр миллион çурă армян пурăнать. Армянсен чи нумай пайĕ, хăйсен аслашшĕсен çĕрне тавранса, хăйсен çĕршывне урăхлатас ĕçе хутшăнма тăрăшать. Америкăра пурăнакан армянсем виçĕ держава лидерĕсен конференцийĕнчи кун йĕркинне армян халăхĕн ыйтăвне лартма ыйтаççĕ. Çапла вара хăйсен историллĕ тăван çĕршывĕнче—Совет Арменийĕнче пурăнас текен армянсене кăмăл тума ыйтаççĕ».

Çак телеграмма çине Совет Председателĕн заместителĕ Шаниян, секретарь Сарлян тата администратор-исполнитель Веркенес алă пуснă.

ФИНЛЯНДИРЕ ВĂРТТĂН УСРАКАН ХĔСПĂШАЛ СКЛАЧĔСЕН ОРГАНИЗАТОРĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Государствăн информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: «1945 çулхи май уйăхĕн пуçламăшĕнче Улеаборг çар округĕн районĕнче, каярахпа вара ытти çар округĕсен территорийĕсенче те вăрттăн усракан хĕспăшалпа боеприпассен тата сиктерсе ямалли япаласен склачĕсене тупнă. Çав ĕçе тĕпчесе пĕлме государствăн политикăллă полицине хушнă пулнă. Çав склачĕсене пĕр пек организацилени, вĕсене пĕр пек пăхса тăни тата хĕспăшалпа боеприпассем турттарас ĕçре çар ведомствин транспорчĕпе усă курни çавăн пек организацилес ĕçе аслă çар командованийĕпе генеральнăй штабăн оперативнăй отделĕ туса пынине пĕлтерет.

Çак ĕçе малтанлăха тĕпчесе пĕлес шутпа, государствăн политикăллă полицийĕ тăратнипе, Нихтиля полковника тата Хаахти подполковника арестленĕ. Нихтиля полковник перемири тăвăччен те, перемири тунă хыççăн та генеральнăй штабăн оперативнăй отделĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ. Хаахти подполковник асăннă отделра пехота подотделĕн начальникĕ пулнă. Унтан ĕçе малтанлăха тĕпчесе пĕлес шутпа, çавăн пекех генеральнăй штабăн начальникне Аирс генерал-лейтенанта арестленĕ. Нихтиля полковникпа Хаахти подполковник вăл кăтартса панă тăрăх ĕçлесе пынă.

Следстви çакна кăтартса панă: 1944 çулхи кĕркунне, перемири тунă хыççăнах, Хаахти подполковник шюцкорăн районри организацийĕсемпе çыхăнса тăракан генеральнăй штабăн уйăрăм офицерĕсене çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче вăрттăн усракан хĕспăшал склачĕсене организацилеме кăтартусем панă. Çӳлте асăннă генеральнăй штаб офицерĕсене инструкцисем тӳрремĕнех генеральнăй штабран панă. Вăрттăн усракан хĕспăшал склачĕсене организацилес ĕç çинчен вĕсем шюцкорăн районри руководителĕсене кăна мар, çар комендантчĕсене те пĕлтерме пултарайман.

Çакна шута илсе, июлĕн малтанхи числисенче, следстви тăвас шутпа, вăрттăн усракан хĕспăшалпа боеприпассен склачĕсене организацилес ĕçе хутшăннă çынсене пурне те, урăхла каласан, генеральнăй штабăн уйăрăм офицерĕсене арестлеме хушнă. Следстви пынă май çав складсене организацилес ĕçе хутшăннă офицерсемпе гражданла çынсен тепĕр ушкăнне арестлеме хушнă. Вăрттăн складсене тупнă. Следстви малалла пулса пырать».

Фашистла Испанире Франко туса ирттерекен маскарад

ФРАНКО ИСПАНИРИ ФАШИЗМА ÇАЛСА ХАВАРМА ТĂРĂШАТЬ

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Мадрид хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер унта Франкон çĕнĕ кабинечĕн составĕ çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Франкон «çĕнетнĕ» правительстви паян декларацие пичетлесе кăларнă. Декларацире каланă тăрăх, «Каудильо» (урăхла каласан, Франко) председатель пулса ертсе пынипе çав правительство политикăллă пурнăç тума тытăнать, çакă вăл вара çĕршыв пурнăçĕнче «çĕнĕ тапхăр» пулса тăрать имĕш. «Çав тапхăр,—тенĕ малалла,—ун умĕнхи правительство ĕçĕсене малалла тăсни пулать. Государство пуçлăхĕ хăйĕн юлашки сăмахĕнче палăртнă политика тăрăх çак ĕçе çĕнĕ сывлăш кĕртмелле».

Малтан пĕлтернĕ пек, «государство пуçлăхĕ» Франко çав сăмахра Испанире кĕç-вĕçех монархи йĕркине тепĕр хут тавăрма сĕнĕç, тенĕ. Вăл «вăйлă та виçĕ пулмалла, фаланга юхăмĕн шухăшне çирĕплетме пулăшмалла».

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америка корреспонденчĕсем Мадридран пĕлтернĕ тăрăх, Франко генерал темиçе çĕнĕ министр уйăрса лартнипе правительствăн фалангистла составĕ питĕ сахал улшăннă. Ассошиэйтед пресс агентствин Мадридри корреспонденчĕ фалангистсен «Арриба» хаçачĕ каланине çинчен пĕлтерет. Хаçат тӳрремĕнех çапла каланă: çĕнĕ кабинет «фаланга идеалне» ĕмĕрлĕхе çирĕплетсе хăвармалла, тенĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Мадридри корреспонденчĕ çакна палăртать: фалангистсем правительствăра хăйсен чи шанчăклă членĕсенчен пĕрине—ĕç министрне Хиронăна упраса хăварнипе тата Куэстăна юстици министрне лартнипе пысăк ĕç тунă. Куэста Италире тата Бразилире посол пулнă, вăл фалангăн малтанхи çулйĕрĕнчен пăрăнассине çав тери хирĕç тăрать.

«Крисчен сайонс монитор» хаçат июлĕн 19-мĕшĕнче Франко тăвакан маневрсем пирки пĕр страница пичетлесе кăларнă. Вăл страницăна çапла ят панă: «Франко Испанире монархи тăвасшăн пулни мĕне пĕлтерет?— пĕтĕмĕшле маскарада пĕлтерет».

Çавăнта пичетлесе кăларнă статьясен авторĕсенчен пĕри Мэнефи çапла калать: Франко монархи йĕркине каялла тавăрасси çинчен пĕлтерни, çавăн пекех «правăсем çинчен калакан закона» пуканелле парламент иртнĕ эрнере йышăнни Франко хăйне тата фалангăна монархистсем пуçăнипе çăлса хăварма кая юлса пĕтĕм вăя хурса тăрăшнине пĕлтерет.

Мэнефи каланă тăрăх, Франкон халăх хушшинче нимĕнле авторитет та çук, вăл полици вăйĕпе кăна власа тытса тăма пултарать. Халăха ирĕклĕн сасăлама май парас пулсан, халăхăн чи нумай пайĕ Франкона хирĕç сасăланă пулĕччĕ.

Франко маневрне Америкăри радиокомментаторсем те хăйсем тухса каланисенче тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Ланг комментатор фашистла Испанипе суту-илу тума пăрахман çĕршывсене критиклет. Вăл США-на Гитлер помощникĕпе—Франкопа суту-илу тăвассине пăрахма чĕнет. США, тет Ланг, Испанипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахмалла. Çапла туни вăл Франко режимĕ ишĕлсе анасси патне илсе çитермелле.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат каланă тăрăх, тĕнчери пĕккĕмĕш вăрçă вăл—феодализма хирĕç пыракан юлашки кĕрешӳ пулма пултарать. Çавăнпа та Испани феодализм наркăмăшĕпе пĕр вĕçĕмсĕр сиенлесе пынине Пĕрлешнĕ написем малалла тӳсме пултарас çук. Халĕ-и, каярах-и, Испани ыйтăвĕ çине ответ памаллах пулать. Çав ответ Франкона хирĕçле ответ пулĕ.

«Нью-Йорк пост» хаçат виçĕ держава лидерĕсене Франкопа дипломатиллĕ çыхăнусем тытассине пăрахма чĕнет. Франко, тесе çырать хаçат, хăйĕн режимне юриех католиксен тумне тумлантарать. Çакă вăл ĕнтĕ Франко пĕтĕм тĕнчери миллионшар католиксен пулăшăвĕпе усă курма хăтланни çинчен пĕлтерет.

«Франко, — çырать хаçат,—йывăрлăхран тухмалли мелсем каçса кайсах шырать. Анчах «Сенкер дивизи» çинчен Сталин манма пултарнă-пи вара, фашизм пуç пулса тăракан монархи çинчен каласчи Трумэн пуçне çавăрма пултарнă-ши?»

США ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН ПАЛАТИНЕ КАНИКУЛА ЯНĂ

ВАШИНГТОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер США представителĕсен палатине çак çулхи октябрĕн 8-мĕшĕччен каникула янă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР прокуратурине главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор, бухгалтер, архивариус, экспедитер, отдел секретарĕ тата шофер кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00177. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000